Картошкĕн парттире тăмасть. Шухăшламан вăл унта кĕме те. „Маркçист“ К.Маркс сăмахĕсене лайăх пĕлет. Сопранисенҫе вара хăйĕн кашни сăмахнех Маркс каланă сăмахсемпе çирĕплетсе хураҫ.

— Уҫрештени штаҫĕсене ҫакармалла.

— Ҫакармаллах. Ытлашши штат тытса укçа нумай пĕтет, тенĕ Карл Маркс.

— Кĕраки кампани тума йала шефсем йамалла.

— Иамалла. Кĕракинҫе шеф йалта пулмалла, тенĕ Карл Маркс.

Килте те Картошкĕн маркçист.

— Матка! Çимеллисем хатĕрле. Карл Маркс каçтăрлахи апат çимесĕр пурăнман.

Урамра йулташĕпе ал парса уйăрăлнă ҫухне:

— Карл Маркс калашле сыв пулха еппин, тет.

Нумайах пулмасть вăл ретаксийе çакăн пек çыру йанă:

— Ĕнер пирĕн йалта пушар пулҫĕ. 5 кил çунса карĕ. Карл Маркс пушар çинҫен çапла каланă: пушар вăл, тенĕ, 5 кил анҫах мар, нумай киле те пĕтерме пултараҫ, тенĕ.

Суйса çырнă, тетĕр пуҫ, вулакансем. Ĕненмелле мар?

Кăштах суйнă ĕнтĕ. Анҫах кирлĕ-кирлĕ мар çĕртех, пĕлмен çинҫенех, Карл Маркспа Ленин „сăмахĕсемпе“ усă куракансем çуки вара? Пур.

Хуçапа прислуки.

Прислукă. Ман каçхине уçăлса çӳреме кайасҫĕ те...

Хуçи. Мартăн 8-мĕшĕ çитре те-и?

Йумăç патĕнҫе

— Виçĕмкун каç лайăх мар тĕлĕк куртăм. Кĕпесĕр-мĕнсĕр тăрса йулнă пек. Мĕне пĕлтеретши вăл тĕлĕк? Хăш йенҫен инкек пырса çаклантĕшши?

— РКИ йенҫен.

Лашасăр вăхăт.

— Мĕншĕн мана вырăнтан кăларҫĕçши? Еçлессе лаша пекех ĕçлеттĕмҫĕ.

— Лаша пек ĕçленĕшĕн кăларнă. Хаҫ ара Шупашкарта лашасем вырăнне автомопилсем пулаççĕ.

Контрактатси.

Иалсенҫе коатрактатси мĕнне йăланманнисем те пур.

Районран пынисем:—Контрактатси тума килтĕмĕр.

Хресҫен:— Ой, кайăрах-кайăрах апла пулсан—„контр“семпе çыхланмастăп.

Тухмалли вăхăт.

— Хăçан Лукка Çеменĕ хупахран тухĕ?

— Хăçан та хăçан ҫӳреҫе витĕр арăмĕ килнине курĕ.

Вĕриленсе кайнă çын.

— Ой, тухтăр, упăшкам вилет. Вĕриленсе карĕ. Мĕнпе пулăшмалмаллине пĕлместĕп.

— Кратăс лартса пăхмарăри? Миçе кратăса çитнĕ?

— 132 кратăса.

— Ан ухмаха йерха!

— Ҫăнах! Ара Коçпирт лавккинҫи 40 кратăс, хăйĕн 37 кратăс, сăмавун 55 кратăс... Пĕтĕмпе 132 кратăс пулаҫ.

Уҫрештенире ĕçлекенсене тасатас умĕн.

— Мĕн çинҫен шухăшлаҫ çав çын?

— Тасалăх сийенлĕхĕ çинҫен.

— Мĕншĕн апла тасалăха сийенлĕ йапала вырăнне хураҫ?

— Мĕншĕн тесен тасатуран хăраҫ.

Тасату хыççăн.

— Комиççи 3 çул хушши „ответлă вырăнсем“ памалла мар турĕ мана. Мĕнле пурăнăпши ĕнтĕ малалла. Ответлă мар вырăнта ĕçлеме пултараймастăп, пĕлместĕп.

Копперативра.

Хĕрарăме:—Тăва парха мана.

Прикашҫăк:—Ҫеретсĕр памастпăр.

Хĕрарăм:—Ҫереҫĕ çук вĕт!

Прикашҫăк:—Çук пулсан пулиҫҫен тăхта.

Кăçал парттийе кĕнĕ ватă çын.

— Хаҫ ваттисене çамрăклагма пултараççĕ. Çамрăклаттармалла сан хăвна.

— Ой, кирлĕ мар. Вара мана никам та ватă парттийĕсă тесе калас çук, комсомолĕс тейĕç.

Лайăх испаҫ.

Карҫăк: Хут пĕлекенсем пурте хулана ексамĕнсем тытма кайса пĕтнĕ. Никам та çырса памасть. Иураҫ аван тупăвҫĕ... вуламалли çурт пуçлăхĕ теççиха çавна. Ара вăл пулман пулсан, поминани кĕнекине кам çырса пана пулĕҫҫĕха?

Пасарти çапăçу.

— Лере пасар кĕперри патĕнҫе такамсем çапăçаççĕ—пĕлеймерĕм.

— Кам хаҫ пукравсăрах çапăçаҫ! Тырă хатĕрлекен копперативсем пуҫ?

Кам мĕнле ҫирпе ҫирлерех параҫ?

Кеморойпа—тĕрлĕрен комиççисен ҫленĕсем.

Траххом ҫирĕпе—ревиçи комиççи ҫленĕсем. Траххом пирки хăшĕсем суккăрлансах лараççĕ.

Пыр ҫирĕпе—сасăсăр йулнă кулаксем.

Шăнтаканпа—копперативпе претсетаттĕлĕ РКИ-рен ревиçи килсен.

Шăл ҫирĕпе йалти копперативпа вышлакан кулак.

Хĕрлĕҫутай таҫҫипе Саххарăв.

— Çĕрĕркелӳ ĕçне пуçăнсан кутăнти йĕмсĕр те йулăн, тетӗ ĕлĕк пирĕн йалти Пăритун муҫи. Çав сăмахсене пĕлсе тăнă çинҫех арăма çĕнĕ кутамкка (лапрашки пирĕнҫен) çĕлеме хушрăм.

— Аçта хăйаматне кайатни мĕн?

— Ытла хытах ав йатлаç-ха, куҫи, халь ĕлĕкхи пек улпутсем мар, хамăр хресҫенсемех ĕçлĕ пуçлăхсенҫе лараççĕ, ĕç тухĕ тен, терĕм арăма хирĕç.

Çапла хирĕçкелесен арăм кутамкка çĕлесе хуҫĕ. Çĕнĕ çăпата сыртăм, çĕнĕ пир тăлапа. Тепĕр мăшăр çăпата çăкăрпа пĕрле кутамккана ҫикрĕм.

— Çу каçмаллах кайатни мĕн, тет тĕлĕнсе арăм.

— Çу каçнипех ĕç пулсан икĕ аллупах сăхсăхăнҫĕ, ик-виçĕ çула кайсан... çак самантрах сăпкара выртакан аҫа—аҫку! ĕсĕрсе йаҫĕ.

Кай йенелле каймалла пулин те ĕç хăвăрт ăнса пытăр тесе, йалтан тухнă ҫух мал йенелли урампа тухрăм.

Кăнтăр çитнĕ тĕлелле кăвак пурçăн хăйу пек ҫалкăшса выртакан Сăр шывĕ çине антăм. Ҫăкăтпа çăкăр çинĕ хыççăн карттуспа Сăр шывне ăсса ĕçрĕм. Сарăлса выртакан Сăр улăхĕнҫе инçетре халăх йĕшĕлтетет. Хĕрлĕ тутăр татăк вĕлкĕшни те курăнаҫ.

Улăх виҫеççĕç, ĕç тухнă. Тĕпри правительствă Çеркаҫ уйесĕнҫен 400 кектар Иетĕрне уйесне памалла тунă. Вара мишавайсем вăл çĕрне Турхан, Панҫăк, тата Хĕрлĕҫутай вулăссене валеҫсе паҫĕç. Пирĕн йала та пĕртак тиврĕ.

1925-мĕш çултах пулҫĕ çак ĕç. Иураҫ. Ку ĕç пирĕн майлă тухнă пирки ун ҫухнехи уйесри çĕр пай пуçлăхĕ Саххарăв хĕпĕртенĕ.

— Иулташсем, терĕ вăл ун ҫухнех халăха, çĕрĕркелӳ туни пире сотсиализăм патне хăвăрт илсе пыраҫ... Тапратăр çĕрĕркелӳ.

— Кирлĕ мар пире çĕр виçи, ахалех лайăх, тесе кăшкăраççĕ хăшĕсем.

— Халь çĕр виçи тапратсан хысна вырманне те уйăрса параççĕ, çĕр шутне кĕртмесĕрех, тет Саххарăв.

— Иураҫ апла пулсан, виçес!

Перçе çитрĕç çакăн хыççăнах Хĕрлĕҫутай çĕр таҫҫине тăватă мишавай, виçĕ вулăс çĕрне йĕркелеме. Кашни йалах кварттăлĕ кварттăлĕпе çĕр çулхи йуманлă мăн вăрмана крам касса валеҫсе параççĕ. Пирĕн йала та пĕр кварттăл—рошҫа тиврĕ. Анҫах вăрман улпуҫĕсен çуç-пуçсем вирелле тăнипе ăйхисем уçăлнă.

Тасаранах вырăнсăр йулас пулаҫ ĕç, теççĕ пулмалла.

Телекрам Шупашкара.

„Хысна вăрманне йĕркесĕр халăх çине виçсе памалла мар, тесе ответ çитрĕ.

— Апла пулсан пире çĕрĕркелӳ те кирлĕ мар, тет халăх.

Ҫарăнҫĕ вара çĕрĕркелӳ ĕçĕ. Расхут туни ахалех пулҫĕ.

1926-мĕш çул.

Çĕрĕркелӳ ĕçĕ ваҫҫи кинçен укçа патшалăхран памалли саккун тухрĕ.

Хĕрлĕҫугай çĕр таҫҫине виçме Шупашкартан 10 пин тенкĕ йаҫĕç. Уйесри кооператсиллĕ сойуса. Ун ҫухнехи йĕркке çавнашкал, сойус урлă памалла пулнă. Сойус пуçлăхĕнҫе хайхи Саххарăв лараҫ.

— Ку укçапа поккути сойус ваҫҫи опорот туса йулас пулаҫ, тет Саххарăв,—çĕр виçи тармĕ.

Илсе тултарҫĕ вара Саххарăв пан улми, йешҫĕкĕйешҫĕкĕпе Сăр шывне пĕveме те çитмелле. Анҫах çав улма сутнă вырăна илсе çитереҫҫен пĕтĕмпех çĕрсе пĕтрĕ. 10 пин тенкĕ ним уссăр пулҫĕ.

Хĕрлĕҫутай çĕр таҫҫинҫи çĕр виçи йалавĕ те кивелсе çĕтĕлсе пĕтрĕ. Çĕр виçи хатĕрĕсем тутăхса ларҫĕç. Мишавайсем темиçе хут та улшăнса пĕтрĕç.

Кăçалхи çул çак таҫҫăна виçсе пĕтермелле тесе пилĕк çулхи план çине те кĕртсе йышăннă. Çĕршыв типсен иртнĕ май уйăхĕнҫе персе çитрĕç мишавайсем.

— «Епĕ» пыраҫҫен çĕр виçи ĕçне хатĕрленме пуçăнмалла мар, тесе телефонокрам персе çитрĕ Шупашкартан. Саххарăв ал пуснă.

Кĕтсе выртрĕç вара Хĕрлĕҫутай таҫҫинҫе 6 мишавай икĕ ерне хушши ним ĕçсĕр. Шалу укçине çавах ĕçри ҫухнехи пекех илеççĕ.

Саххарăв çитрĕ. Халь вăл мелиоçем пуçлăхĕнҫе ĕçлет.

— Çырлахах турă, теççĕ ватă çынсем. Ку хамăр патран кайса пуçлăха кĕнĕ Саххарăвах ĕçе тăсса расхут кăларттарса усраҫ-ĕç.

Хĕрлĕҫутай çĕр таҫҫине ку таранҫҫен те йĕркелесе пĕтерейменха. Халăх укçи çаплах тухса пыраҫ.

Киле тавăрăнсан арăма каллех çĕнĕ пиртен кутамкка çĕлеме саккас памалла пулиха, тесе тăратăп.

У.

Асли ҫеретре.

Вытвишентсăсене хисеплемен йурăхсăр çынсем пур. (Хаçатран).

— Краштанин, ма тĕртен? Вытвишентсă терĕни мана?

Йăван пуснă кун.

(Текламатси валљи).

Йăван пуснă кун
Пуйан Кĕпитун,
Кайрĕ ӗиркĕве,
Кăнтăр кĕллине.
„Ей, турăçăм, турăçăм,
Ан пăрах мана, ан çиллен.
Санăн хăватлă шуçăм
Ан тартăр ман çирен".
Мăкăргатаҫ ӗиркӳре йерипен
Пит хуллен.
Çумĕнӗе тăраҫ кĕтӳçĕ Тарас
Мĕн илес, мĕн парас:
Кĕпи ун çĕтĕк, пиçхи çук,
Хутланса çеç тăраҫ хăй те ӗух.
„Есĕ кĕтӳре,
Манăн ĕнене
Çапнăӗӗĕ пĕрре пушăпа
Тыткалăп сана хушăран хушăпа"
Аса илӗĕ Кĕпитун
Урлă ӗун.
„Ей турăçăм, турăçăм,
Ан пăрах мана, ан çиллен.
Санăн хăватлă шуçăм
Ан тартăр ман çирен"
Хĕрес хуӗĕ хăй çине.
„Тыткалăп...
Парăнтарăп...
Сирĕн пек çерçийе
Мĕн усрас çĕр çинӗе?".
Пăхса илӗĕ Тараса
Кĕпитун мă-ăш сывласа.

———

— Тарас Иермолайӗ,
Кĕретпĕр ман пата,
Пыраҫ Йăван Йăванӗ,
Пулаççĕ хăнасем тата ӗа,—
Терĕ Кĕпитун ӗиркӳрен тухсан
Тараса ӗĕнсе, тытса алăран.
— Ĕçсем пурӗӗĕ-ха килте...
Килетпĕрте-иха тен...
— Праçник кунне мĕн вĕçлесси,
Тармĕ вăл пушă, ĕçлесси...
Айта, кĕр.
Ерех ĕçĕпĕр!

———

„Туллит-туллит ме куӆӆанас,
Елик та номай ай куӆӆанны"...
Шăратаççĕ йурра хăнасем,
Ӗӳхенеççĕ сăра куркисем.
Тарас та ĕçрĕ ĕçмеллех,
Тăваҫ вĕт ĕçкĕ хăй ĕçнех:
Ӳсĕрĕлӗĕ Тарас
— Мĕн тăвас?
— Сывăратас!
„Ей, турăçăм, турăçăм,
Ан пăрах мана, ан çиллен.
Санăн хăватлă шуçăм
Ан тартăр ман çирен!"
Сăхсăхрĕ пуйан пит хуллен
Пăрахрĕ пурта пит çӳлтен.

———

Йăван пуснă кун
Пусрĕ Тараса Кĕпитун.

Ç. Шăпӗăк.

Кам мĕн çинӗен çырма хушмаҫ.

Уравăш (Вăрнар районĕ) йалĕнӗи комсомол çекреттарĕ йалти самоконшӗĕксем патĕнӗе самоконккăсем хăй ĕçсе çӳрени çинӗен çырма хушмаҫ. Çырмасăрах пĕлеççĕ ăна хамăр йалсем, тет.

Мĕтикасси (Çĕрпӳ районĕ) йалсоветӗĕ Иӳçкассинӗен илсе пынă сорттировккă, вăрлăхсене суртланă вăхăтра, ахалех ларни çинӗен çырма хушмаҫ. Ан çырăр ун çинӗен; çырсассăн та усси пулас çук, мĕншĕн тесен пирĕн машшин вулама пĕлмест, тет.

Мăн Йанăш (Шупашкар районĕ) потребиттĕл кооператтивĕ хăйĕн Тарăн Çырмари отделенинӗе сасăçăр йулнă çынсем пурри çинӗен çырма хушмаҫ. Мулкаӗ Кĕркури, Кантратти Павăлĕпе Микихвĕрĕ, Елекçи Микихвăрĕ— сасăçăр йулнă çынсем пулсан та, ӗлен укçине ӗухăнсемпе пĕр танах тӳлеççĕ, тата çийĕнӗен кооператтив ӗленне епĕр кĕртмен вĕсене, хăйсемех кĕнĕ, теççĕ.

Çĕпĕрти Михайлăвккă (Куçнетск окрăкĕ, Паӗат районĕ) кооператтивра ĕçлекенсем хăйсем кантурта ĕçсе ӳсĕрĕлсе çывăрни çинӗен çырма каламаççĕ. Епĕр Ӗăваш республикĕнӗи кооператтăрсем мар вĕт,—пирĕн çинӗен çырмасан та йурĕ, теççĕ.

Турикас (Тутаркас районĕ) комсомолĕсĕ Йевтоккимăв хăй присăвнĕксем хушшинӗе ĕçлени çинӗен çыртарса, халăха пĕлтерестĕн мар. Хам ĕçлемен унта— кармуӈ (хут купăс) ĕçленĕ; присывнĕксене йертсе пырас ĕçе те кармунех туса пынă, тет мĕскĕнленсе.

Хусанта инженер пулма вĕренекен Михайловски, хăй ӗăваш пулин те, студентсем хушшинӗе ӗас ӗасах: я презираю чувашскую нацию», тенисене хăйĕн аштăамăшсене каламa хушмаҫ. Каласассăн—каникkула кайсан анне ӗăкăтсем çитерме пăрахĕ, тет.

Шупашкар райĕçтăвкомĕн куӆтçут инçпевтăрĕ Пекассăв й. (вăлах уӗитлĕ) сасăçăр çынна Паçпак йалĕнӗи йаçлĕре ĕçлеме вырăн пани çинӗен çырма хушмаҫ. Ан çырăр ун çинӗен, мĕншĕн тесен епĕ „Капкăври" стаӗйасене пурне те вулатăп Хам çинӗен çырнине вулама кăмăллах мар, тет.

Йĕпреçри 2-мĕш сыпăклă шкулта 2 мĕш группăра вĕреннĕ аӗасем—Илйин, Çеркейĕв, Антрейĕв, Касаккова хăйсем, çураки кампнани иртерме Ентрийалне куӆтпоххота кайсан, Кăшмасра ним пĕлмиӗӗенех ĕçсе ӳсĕрĕлни çинӗен çырма хушмаççĕ. Вăл ĕç çуркунне пулнă. Çуркуннехи ĕç çинӗен хаӆ кĕркунне тин çырмасан та йурĕ, теççĕ.

Иатне улăштаратпăр.

Уӗрештенисенӗе тасату, Хурамалти (Йĕпреç районĕ) вуламалли çуртра тасату çук. „Кутăн кĕрсе кутăн тухмалла" пӳртĕнӗен. Урайне çулталăкра пĕр тумлам шыв та тивмен. Хаçат-журналсем хурăхлăн çак ӗыссăр урайĕнӗе выртса çӳреççĕ, тет М—нăв.

«Капкăн» ресоӆутси: «Хурамалти вуламалли çурта» «Хуралмалли вуламалли çурт» тесе йат парас. Çĕнĕ йат пани çинӗен Йĕпреçри çут пайне приккас тăрăх пĕлтерес.

Шкул ситĕсем

Хăй килте çук ӳхне.

Кĕрхи çăмăр ӳаштаттарса çаваҫ. Ерех савăтĕнӳе ĕçлекен Маккарăв хăй çинӳен сивĕ çăмăр шывне силлерĕ те, арăмĕ çумне пырса лăпӳăнса ларӳĕ.

— Ӳăтма çук ку аӳаран—терĕ вăл арăмне елекленĕ пек пулса—халиӳӳен курман йапала вĕтха ку. Ара çав пĕтĕк çеç шăрка çемйере мĕн тăвас килнĕ çавна тăваҫ. Ун пек аӳана пионера кĕрт те кайран нуша курса лар...

— Унпа нимĕнле те килĕшме çук,—терĕ йăвăррăн сывласа арăмĕ.

— Нумай пулмасҫ мана та:—пуçкилсемпе ан харкашнă пултăр. Ун пек есĕ опшӳешитти сывлăшне пăсатăн—тесе кăшкăрса пăрахрĕ.

— Манпа тата лайăхрах çĕмĕрлсе илӳĕ. Епĕ пивнойа кĕнине курсанах, çав тери пăсăрлангарма пуçларĕ, ман вара ирĕксĕрех пивнойран тухса каймалла пулӳĕ.

— Мана пӳлĕмри урайа шăлма хушрĕ... Тусан сывлама ӳăрмантараҫ, тет, çав тери кăшкăрма тытăвӳĕ вара, ерешмен картисене ивĕ сехет хушши тасатса çӳрерĕм.

— Шăлнĕне ирхине мунӳа кĕме йатлаçсах кăларса йаӳĕ... Çăвăнан пулсан çăвăн, çăвăнмасан апат çиме кĕртместĕп, тет...

— Манне икконсене кăларса ывăтрĕ. Çак етем пуçне сĕрĕмре усракан, тет.

— Мĕн каламалли пур унпа, мавне шалу укçине вĕçертсе илестĕн тăрăшаҫ... Пурĕ пĕрех ĕçсе йаратăн, перекет кассине кайса хыв, тет.

— Мĕн каламалли пур, ывăлăма пионера парса, çынсенӳен уйрăмах пултăмăр çав. Май мар ĕнтĕ...

— Ана унтан кайалла килсе килес мари?

— Хăтланса пăхкалаха унпала... Вăл сана илсе килтерĕ. Спаççипах хаӳ, хамăра окӳапрйонăк туса хуман.

— Тата леш иртнĕ каçхине... ш-шăп... Килет! Пĕтук килет... хăй килет... Ан шавла... Унсăрăн... мĕн тума пӳрт умĕнӳе тăраттăр, мĕншĕн клупа каймастăр, тесе çыпçăнĕ... Ут хăвăртрах, карӳăкăм, унтан ыррине куряймăн... Каçар ĕнтĕ пире, Пĕтук, карӳăкпа ытлашши çапкаланса çӳренĕшĕн... Епĕр кайатпăр клупа та, кинона та кайатпăр. Ес ан çиллен ĕнтĕ, епĕр ватă çынсем, ӳасах тăна кĕрейместпĕрске...

Пĕтук майĕнӳен хĕрлĕ калстăкне хыпашласа пăхрĕ те, ашшĕ кайниве кура:

— Кайах, кай ĕнтĕ, старик, аптратăп епĕ сирĕнпе. Сирĕн пеккисене хăçан çĕнетсе пĕтерме пулĕши, терĕ те темскер çинӳен хыпалансах çырма пуçларĕ. О.

2-мĕш сыпăклă шкулти каласу.

— Шкулта вĕрентекен йапаласенӳен хăшĕ санăн йăвăртарах?

— Таплитсă умношени.

Хатĕрленет.

— Килес çул хăш шкула вĕренме кайас, тетĕн?

— Стипенти нумайрах параканнине.

Хĕллехи выппăск.

— Есĕ хăçан тухрăн çав шкултан вĕренсе?

— Хĕлле.

Ытти районсенӳе апла мар.

— Ăçтисемши ку йĕркеçен аӳасем?

— Ăçтисемне пĕлместĕп те... Хĕрлĕӳутайпа Ĕлĕк районĕсем пуӳи анӳах. Унти аӳасем халĕ йĕркеçене йерсе кайнăӳӳĕ.

— Ма?

— Ара унти райĕçтăвкомсем шкулсем ваӳӳи „Капкăн" илсе паман.

— Мĕнле вĕрентсе кăларӳĕç апла хĕллех?

— Кулак аӳи тесе.

Ликпунктра вĕренекенсемпе хаӳхи самана.

— Хут пĕлменнипе кĕрешекен ушкăн кăлараҫ пуӳ ку хаçата?

— Ма?

— Ара кунта пĕр тĕлте сăмахсене сыпăкăн сыпăкăн уйăрса сырнă. Ак вулаха: Ӳан-Кай-Ши... Ӳшан-Çуеӳан... Ен-Си-шан... Фын-Иуй-çач... Ван-Ӳшен-Тин... У-Ӳшао-ӳу...

— Пире вулама çăмăл пултăр, тенĕ ĕнтĕ.

№-лă вăтам шкулта вĕренекен аӳасен тултармалли анкеттă.

1. Мĕн йатлă есĕ, аçу мĕн йатлă?
2. Авланнă çын-и ес, арăмупа уйăлнăскери, йе алимент тӳлекенскери?
3. Уӳитлĕсенӳен миçе хут ăслăлах шутлатăн хăна ху?
4. Ернере миçе кун канмалла тусассăн, санăн лайăхрах (ӳыхвăрсене римла ларт,—сăмахран—IV, V, VI, VII).

Пуп хĕрĕсеке ăс пани.

Пуп хĕрĕсем! Пуп хĕрĕ тесе, сире шкултан кăларса йарастăн пулсан, хăвăр шкулта вĕренекен пĕр пĕр пролеттари аӳине каӳӳа тухăр. Аӳи шатраллă, пахмалла мар илемсĕр пулсан та йураҫ.

Сăлтав пур.

— Мĕншĕн сирĕн йал аӳисем кĕпесĕр йĕм вĕççĕнех çӳреççĕ?

— Ара кооператтивра ӳлен маррисеке çитсă паманран. Маӳкаш.

Мăн çăвар,

— Атте, санăн ĕлĕк пит мăнă пулнă пулнă пулмалла çăвару?

— Ма?

— Халăхăнне есĕ 3 капан утă çисе йанă, теççĕ. П. А.

Сатаӳă.

Пĕри ĕнер Шупашкар хули кооператтивĕнӳе çур кило хура çăкăр, 800 крам тулă çăкри илнĕ. Хура çăкри (кило) 12 пус тăраҫ, тул çăкри 20 пус.

Пĕлес пулаҫ: миçе сехет тăнă вăл ӳеретре хула кооператтивне пула?

Пасарти ҫерет.

Кулаксем вăрçă тухсан таварсем пулмаççĕ, тесе халăха хăратаççĕ. (Йалнор).

—Мĕн ку?
—Çăпата ҫереҫĕ,
—Мĕнле?!
—Вăрçă тухаҫҫен килсе йулас, тетпĕр.

Ратио шалçипе пуçĕнҫен...

— Пуçĕнҫев?! Мĕшĕн-ха ĕнсинҫен мар?

— Е!.. Енсинҫен парсан, пуçĕ татăлса ӳкме пултараҫ, вара пуçсăр етемпе мĕн тăвас-ха?

— Пуçĕнҫен! Çапах та шалçапа çапсан, пуçнĕ çĕмĕрсех пăрахма пулаҫ-ске, аҫам...

— Е, пĕлес пулаҫ кама çапмаллине... Пĕр-пĕр пурократа, йĕ волокитҫăва пуçĕҫен шалçапа çапсан, ҫăнах та пуçĕ çурăлмалла, анҫах пĕрпĕр ратио тусне ратио шалçипе çапса пăх-ха, çурăлĕ унăн пуçĕ? Ни йеп-ле те çу-рăл маст. Ратио тусĕн пуçĕ ҫукунта ҫи лайăх сортлă ҫу-кун-тан!.. Çавăнпа та ратио тусĕн пуçне ратио шалçипе çапсан, вăл хăнкт! та тумаст.

— Вон мĕнле иккен, ахаҫ пулсан...

— Ахаҫ пулсан вăл çывăрсах каймалла, капла, шалçапа çапса пăхсан, вăл çапах ăйхăран вăранаҫ.

Е!. Ну, ăйхăран вăратассишĕн кăна шалçапа çапсан, йураҫ ĕнтĕ, йуратех... Çапăр, çапăр...

— Ратио шалçипе пуçĕнҫен! Ей, тухăр, ҫеретĕ тăрăр, ратио тусĕсем...

Тухса тăҫĕç хăйсен хытă калаçман «кромкоковориттĕлĕсемпе» пĕкрĕлсе, ерешмен картисемпе пĕгĕмпех каркалавса «ратио тусĕсем»...

Е!.. Тухрăри? Килĕр-ха, килĕр-ха кунтарах, «ратио муҫисем», епĕ сире шутласа тухам... Ну... Ну, кама ҫерет, тух-ха, тух-ха, кунтарах...

— Е-е-е-е Епĕн? Епĕи Улатăр районĕнҫи Ратио Тусĕсен ушкăнĕн райсоветĕĕн пуçлăхĕ... Крошшĕв... Крошшĕв пулатăп...

— Е, Крошшĕв-и-ха есĕ? Кил-ха, кил-ха... Мĕншĕн есĕ сан пата ратио инструктăр райсовета тĕрĕслеме килсен, тарса çурерĕн? Мĕншĕн есĕ ăна оркăнисатси çинҫен ҫыхвăрсем памарăн, е?

— Мек... мек... хррр! фăй... епĕ мар вăл, еп мар... Каçар, тархастăн... Еп халех ҫыхвăрсем тăратма хатĕр, ман вĕсем кăсйарах, акă.. акă... ҫлен укçисем те пур манăн, манăн пурте пур... Хррр! Пшшш! Фйӳ! Манăн пурте пур...

— Ратио шалçипе пуçрав! Ан калаç халĕ. Халех ҫăваш Ратио ушкăнне кайса пар...

— Ҫиҫҫас, ҫиҫҫас...

— Кам тата унта? Е, Патăйăл районĕнҫи ратиосовет пуçлăхĕ Петров йулташ мариха ку çын... Килех, килех...

— Ҫар-хас-шăн ан айăп лăр ĕнтĕ... Пĕртте епĕ айăплă мар. Тырпул хатĕрлес ĕç ҫарса тăҫĕ, çавăнпа та епĕр райсовет саççетанине çулталăк та çурă пуçтараймасăр тăратпăр.

— Алла пулсан, ратио йаҫейккăсем ĕçлеççĕ пуҫ сирĕн?

— Йаҫейккăсем те тырпул хатĕрлес ĕç пиркийех ĕнер 12 сехетре ĕçлеме пăрахрĕç ха, хаҫ вĕсем те ĕçлемеççĕ...

— Хм!. Сехетне те пĕлетĕр епшин... Ратио шалçипе пуçрав! Шалçапа, шалçапа!... Кам тепĕри?

— Епĕр, епĕр, Шăмăршăри ратио тусĕсем пулатпăр...

— Аçта есĕр, ăçтан кăшкăратăр, Палгийелĕнҫе Каппар хĕрринҫе ларакан ратиостантсинҫен мар пулĕçке?

— Çук, çук! Епĕр пуштă тăпсакайĕнҫен кăшкăратпăр. Кунта епĕр райсовет саççетанине тума тесе кĕнĕҫĕ те, такам пире хупса хуҫĕ. Епĕ пуштă пуçлăхĕ Ваççилйĕв, райсовет пуçлăхĕ, нийепле те кунтан тухаймастăп... Сулăрха ман вырăна урăх çынна райсовет пуçлăхне... Ау!..

— Ау!.. Шăмăршăри ратиосовет, ăçта есĕ? Тух тăпсакайĕнҫен! Ваççилйĕв, ҫĕн ҫасрах Урюккăва пулăшса, унсăр сан ĕçӳ тухмĕ...

— Ау!

— Ау Ау! А! Ратио шалçапа пуçрав!—акă мĕн сана Ваççилйĕв—ратиосовет пуçлăхĕ. Кам тата ҫеретре тăраҫ?

— Епĕ, епĕ Сĕнтĕрвăрринҫи ратиорайсовет пуçлăхĕ Саҫукков...

— Ратио шалçипе!.. Ратио шалçипе!

— Мĕншĕн, мĕншĕн-ха мана сăмах памастăн...

— Ан калаç, ан калаçка, Саҫукков, çук сана пайан сăмах, ситес номĕрта сана сăмах пул... Халĕ сана... шалçапа, шалçапа!..

— Хррр! Пăшш! Фйу! Трахх!

Ратко Улă

Тырă хатĕрлес кампанире.

(Копператтивсен çапăçувĕ).

Ăмăрту та, анăах сотсиалисăм ăмăртувĕ мар.

Тишкерăĕк.

— Рас тишкĕрме хушаççĕ, çăварна карса тăрас пулмасăр, тишкĕрес пулаăр,—тетăĕ манăн пĕр паллакан çын.—Хăраса тăма йурамасăр!

Хăйуллăх кирлех. Ăна хаклас пулаăр. Пур те тĕлĕнеттĕç унтан. «Çав тери хăйуллăскер, мур пултараăр!

Вăл ăçта ĕçленине епĕ те ыйтман, мана та никам каламан. Ĕçлет-и, ĕçлемести? Пурне те ăçтан пĕлсе пĕтерен? Çапла çивăĕ калаçнăран çеç палларăм епĕ ăна. Ыттисем ăна çавăнпа Тришкерăĕк тесе йат паăĕç. Ну йурĕ, Тишкерăĕк пултă.

Пĕрре епĕ ăна столовăйра куртăм. Кăшкăрса çеç лараăр.

— Ма йашка тутлă мар сирĕн?—ахăраăр пирĕн тишкĕрăĕк.—Нимĕн тути çук. Йашка пулаăр-и ку?

— Ма мана калатăр, епĕ пĕçерместĕп, пĕçерекене кала—тавăрса хураăр апат пыса паракан хĕрарăм.—Кала пуçлăха!

— Есĕр пур те пĕрех—ăарăнмасăр тишкĕрăĕк.—Иккĕмĕшне хăçан парăн? Çывăрса çӳрĕтĕр.

— Вăхăт çук, кунта есĕ кăна мар.

— Памалла сире вăхăт.

Пĕр сăмахпа каласан пирĕн тишкĕрăĕк ниçта та ахаă тăмасăр. Шавлаăр, кĕрлет.

— Ну хăйуллă аăа, пĕрте хăрамасăр—шухăшлаççĕ куракансем.

Тепĕрре епĕ ăна (калама та аван мар та, каçарăр) мунăара куртăм. Керой. Пĕтерет милĕк сутакана. Сассинăен палларăм, çавăн сасси, çурăк ăан пек йанăраăр.

— Милĕк пулаăр-и ку,—йан кайаăр айалалла.—Хулă ку, милĕк мар. Астăвас пулаăр.

— Пире çавăн пеккине параççĕ.

— Пире, пире... памалла сире, ăорт!

Ăмăрт кайăк, арăслан, рытсăр! Иепле йуратас мар ун пек хăйуллă çынна.

Астăватăп, тата тепĕр çĕрте тепле, такçан, пĕрле пултăмăр унпала. Копператтив лавккинăе.

— Паматкă пулаăр-и ку,—тăсаăр прикашăĕк патнелле паккет. Паматкă мар ку, тăм. Хăйарпа тăм хутшăнтарнă та, паматкă вырăнне сутатăр, йурăхсăрсем!

— Ма мана калан-ха есĕ, епĕ илмен вĕт, пуçлăха кала, манран вăхăтлă виççе парасси пултăр. Епĕ айăплă мар.

— Памалла сире айăп. Вара пĕлĕттĕр, ăортсем! Каççиршăва укçа ăас тавăрса памастăн тесе вăрçаăр.

— Мĕшĕлтетен çунатне амантнă шăна пĕк. Хăвăрт ĕçлеме вĕренес пулаăр. Кĕтсе ывăнтаратăр.

—Ыттисем кĕтеççĕ вĕт, шавламаççĕ. Ай-йай, хайар есĕ!

— Памалла сире хăйар, вара вĕренĕттĕр.

Нумай пулмасăр манăн пĕр уăрештенийе каймалла пулăĕ. Кăритурта Тишкерăĕке хирĕç пулгăм. Куçĕ-пуçĕ алăаравă, васканипе алăк умĕнăе тăракан карăăка ăут çеç сирпĕтсе йамарĕ.

— Ай тур тур, ăуĭ таптаса каăăĕ,—аллине сулаăр хĕрарăм.

— Мĕн тăмапа пек пуçва тăратса тăран? Çын килнине курмастăпăм?

— Умран килмерĕн вĕт есĕ, курмарăм, хыçалган сиксе тухрăн. Куçăм та витĕрех курмасăр.

— Кăтартмалла сире, ăортсем! Иĕркене пĕлмеççĕ. Ăçта та тишкĕрме ăупаăр, хăраса тăмасăр. Пашка!

— Ма пит васкатăн?—ыйтрăм епĕ унтан.

— Саветушăи лавккана пирус илме йаăĕ те, вăхăтра килмесен вăрçасран хăратăп,—терĕ вăл мана хирĕç.

— Хм... Ăна ма „кăтартмастăн". Иепле вăл сана, хăйуллăскере...

— Ой-ой, ан шавла, мĕн каласатăн. Ун пек калаçма йураăр-и. Иеринренрех, илтсен тем курăн,—терĕ те алăк хăлăпне тытрĕ. Çав вăхăтра ăна хирĕç саветушăийĕ тухрĕ.

— Ниçта та килентейместĕн есĕ—çавăрса илăĕ пуçлăхĕ ăна курсанаăр. Тупрăн и „Сафо"?

Куç улшăнаăр и йе темле хăват пулăĕ и? Тишкĕрăĕкĕн çӳллĕшĕ пĕр шиге йахăн ăакре, аллисем усăнăĕç, куçĕсем хупăнăĕç.

— Каçарăр, айăплă епĕ. „Сафо" çук—„Мосаикка" çеç, акă мейĕр,—тăсрĕ вăл ăĕтрекен аллипе паăкă пирус, унтан пуçне ăиксе кăнтселере кĕрсе кайрĕ.

Вăт сире „тишкĕрăĕк"!

Ç. Иалавĕн.

Курнавăш---курнах уш!..

Курнавăш курнах уш, курман мар, татах та курĕ.

Кооператтивĕ ăмăртура 1-мĕш преми илӳĕ. Преми паттăрĕсем те «Капкăна» лексе тапаланса кăтартрĕç.

Курнавăш ман кукаçейĕ те курнă. Вăл вулăсри пĕр пуйан, сутăçă пулнă. Епĕр те кайа йулас çук... тет вара хăйĕн кăмăлĕ çаврăнса килнĕ-килменех Икнаťйĕв Никколай Васҫилйĕвиҫ уҫитлĕ.

Кун пекки Кĕçĕнйелӳĕк районĕнӳе кăна мар, пĕтĕм Ҫăваш республикĕнĕ те пулас çук. Пур йенӳен те вăл «аккуратлă» çирĕпĕн куккăшĕ ура йĕрĕ çине пусаť.

Кам пур урăх аштĕпе ывăлĕ пĕр шкулта, пĕри саветуйушӳи, тепри шкул çекреттарĕ пулса ĕçлени?

Никколай Васҫилӳăпа аштĕ пĕр шкулга, пĕр йăвара кайăк пек кăшăлтатса çӳреççĕ.

Партти кăнтитатĕнӳе тăрса, пай укçи паӳах тӳллемесĕр, вступительнăй 50 пус кăна тӳллесе, „Кĕрешӳ“ кооператтивĕн ревизи комиççи претçетаттĕлĕ пулакан кам пур?

— Никколай Васҫилӳăсăр пуçне ăна кам пултартăр, ара...

Ку кооператтивăн тавар илекенĕ (закупщик) К. Веков темĕн ӳулĕ тапаçлансассăн та, ревизи комиççи претçетаттĕлне çитейес çук.

Курнавăш курнах уш. К. Веккăв пурлăха тытказама пĕлнине те лайăхах кураť. Пиҫкесем, тавар йешӳкĕсем-мĕнсем патах урам хушшинӳе йăванса çӳреççĕ. Макаçăнри виткĕç тимĕрсем Веккăв пӳрӳĕ çинелле пăхса, унăн кĕлеӳĕсене кĕрсе вырнаçаççĕ. Кирлĕрех таварсене хăйсен йалĕсене тата сăмсаран пăхса ытларăх параť.

Веккăв та ĕçлет, Анӳах вăл тимĕрсене кăна хăй патне туртаť, таварне те хăйсен йалнелле, йе хĕрелнĕрех сăмсасене параť. Кунпа çеç Икнаťйĕва хăваласа çитейрес çуках. «Лешĕ „хуçайствĕннăй“ çын.

Икнаťйĕв кооператтиван сатне хăй аллине çавăрса илме пĕлӳĕ. Панулмийĕсем хăйне валӳи кăна. Пахӳара 40 кватрат хăмла ӳсет. Ана та Икнаťйĕв хăйне валӳи илет. Сăра тума йатнех, тет. Пысăк хоçайствĕннĕк вара, Ҫăваш наркомпромторкне махкĕ парас çук.

Кооператтив пахӳинӳех 50 кватрат хăйар лартнă пулнă.—Лайăх саккуска пулаť ку, тет Икнаťйĕв—йӳçĕтме тытăнаť. „Холотнăй“ туса „теççертлама“ (хăйĕн сăмахĕн) тепĕр 50 кватрат помитор пур. Ана та Икнаťйĕв хăй патне туртаť. Кукашшĕ ӳухăнсен йунне ĕçнинӳен те лайăхрах ĕмĕт кооператтива. 50 пус кăна тӳлленĕ, хăй кооператтив кăвапийĕ пулса тăнă. Çавăрттараť. Пыршă кумнă пекех кумаť. Çулла Икнаťйĕв, çынсем пурте хирте тырă вырнă ӳухне пĕр тутара ӳĕнсе пираť те, кооператтив сторăшĕ куç умĕнӳе кооператтива „ревизилет“ те „реквизилет те“.

Тутарне кооператтив кил хушшинӳи витĕне сутаť, сторăшне—2 тăрăх сапур параť. Хăй—пĕр 500 тенкĕ тăракан çурт-йĕре хăйне халлаť. Куншăн пурĕ 132 тенкĕ тӳллеме пулаť. Халĕ 35 тенкĕ кăна тӳлленĕ-ха. Ытти не ун патне пушă алăпа пырса шаккаса çӳре...

Кооператтивран вăлах кивçенле пĕр 200 тенкĕлĕх тавар сăптăрса илнĕ. Параççĕ. Хăй ревизилемелле вĕт кооператтива, ăçтан ӳарса тăрăн. Хăйĕн ирĕк!..

Иăмăкĕсене те вăл „хуçалăхлă“ ура çине тăратнă. Çу каçах 2 йăмăкĕ аӳа плошӳаткинӳе кооператтив укçине тăранса пурăнаççĕ.

Килти хуçалăхĕ те хăйсен çирĕп кооператтив правленине çирĕп хăй аллинӳе тытаť. Курнавăша та хăйне çирĕп кăтартаť.

Пуйан кукаштĕне Курнавăш курнах уш. Ăна Икнаťйĕв мĕнле çулсемпе „хăваланине“ те курнах уш 1-мĕш премиллĕ Курнавăш.

Васанкка.

Тырăпа план.

Хресӳен: Епĕ ытлашши тырра сутса пĕтертĕм ĕнтĕ.

Çутуилӳпе промышленнăç комиссариатĕнӳе ĕçлекен: Ех, тăнсăр!.. Епĕ план туса пĕтериӳӳен те тăхтамарăни?

Вăрăм çул.

Ишекри (Шуп. р.) 1-мĕш сыпăклă шкулăн пуçлăхĕ Х. Тмитрийĕва, хăй укçипе, 44 тенкĕ парса, шкул валӳи вутă кӳрсе килтернĕ. Çав 44 тенкĕ укçана мана тупса парăр тесе, Шупашкар райĕçтăвкомне сайавлени панă. Шупашкар райĕçтăвкомĕ хутне вараласа анӳах панă: «Р. Ф. на заключение» тесе ан пуснă претçетаттĕлĕ, полагал-бы уплату произвести за счет самообложения» тесе ал пуснă райфо Александрăв, унтан «на заседание» 3/IV, тесе ал пуснă каллех претçетаттĕлĕ, татах унтан, апрелĕн 13-мĕшĕнӳе „рекомендовать из средст самообложения“ тесе ал пусса хураť çав претçетаттĕлех. Татах та унтан, направить в Ишаковский СИК для учинения расчета из средств самообложения», тесе ал пусаť райфо пуçлăхĕ. Хутăн çулĕ вăрăм. Вăрăм çул хыççăн хуӳĕ халĕ Ишек йалĕçтăвкомĕн кĕнӳелерĕнӳе канса выртаť. (Халĕ те пăхса тухман).

«Капкăн» ресольутси: Канах сайавлени. Волокитӳĕксем пĕр теллемесĕрех йăвăр аллисемпе пуснă пирки ӳире йенĕ хыççăн, капма та тивĕç.

Тасату комиссисене ырă сукни йе механисăмне йусанă аппарат.

Ответлă ретактăр самеçтитĕлĕ К. М. Титтов.

Чувашлит № 1859. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“. Нап. 2900 экз.